К С(чув)
А92

Илем

# Алексей Аттил



Сан умăнта
иккĕн эпир:
эпĕ
тата
пурлăх — тепри.

Эп — пĕтĕмпех
пуç та чĕре,
йĕм те кĕпе...
Пурлăх — çĕрет.
Пурлăх — урать.
Миçемĕшне
пурлăх хурать
тупăк ăшне!

Тен, эс калан:
çын чухӑнни
пулнӑ авал!
Тӗрӗс, чӑнни.

Чухӑн, пуян,
тан мар тӗнче —
халь океан
тепӗр енче.

Пурлӑх ачин
мӗн ӗлӗкрен
паян кунччен
пур пӗр еткер:
сӗмсӗрлӗх ку,
пилсӗрлӗх ку,—
пурӑн пӗр ху,
çын куртӑр хур.

Сан умӑнта
иккӗн эпир:
эпӗ
тата
пурлӑх — тепри.

Ылтӑн ука
хӑлха çинчен
чӗнчӗ: «çука
юлтӑн, пичче».

Хура шӑрçа
авкаланать,
мана вӑрçать:
«Эс яланах
хӑлӑхсӑр пул,
пул эс — арçын,

Юратăву
вилнĕ сан, çын».

Транзисторсем,
тĕкĕр, йĕке —
тăчĕç кĕрсе:
йышăн, пике!
Ку çеç те мар,
кив такана,
çут сăмавар,—
йăлт хăтана!

— Килĕшмесен,
ĕлĕкхилле,
ĕсĕклесех
каччă килне!..

Сан умăнта
иккĕн эпир:
эпĕ
тата
пурлăх — тепри.

## ÇИЛ

*Б. Пастернакран*

Эп ĕнтĕ пĕтнĕ. Чĕрĕ эс çаплах.
Аса вырнаçайман кунçул та чĕрĕ.
Ман йăвана енчен енне çапса
пĕр çил çеç чарăна пĕлмесĕр йĕрĕ.
Йĕритавралăхра çав хырсемех.
Çилпе кашнийĕ симĕс парăс карĕ.
Пĕрерĕн мар, пурне те вĕсене
çил чарăна пĕлмесĕр суллантарĕ.
Пур сас-чĕве пуçтарĕ ĕрете —
çил ят парса калас сăмах тем чухлĕ.
Пурне те каласа пĕтерĕ те
сире валли сăпка юррийĕ пуçлĕ.